**Урапа**

(юрă)

– Шăлтăр-шăлтăр урапа,
Ăçта кайрăн, урапа?
– Кайрăм, кайрăм урапа
Утсем валли ут çулма.
– Шăлтăр-шăлтăр урапа,
Ăçта çултăн утăна?
– Çултăм, çултăм урапа
Парлак çинчи курăка.
– Кампа çултăн, урапа,
Кампа çултăн утăна?
– Çултăм, çултăм урапа
Атте тарçи Елеçпе.
Атте тарçи Елеç пур,
Унăн çави вырăсла:
Пĕр çавăрса кастарсан.
Ик ытама кĕрес çук.

*Иванов, К. Урапа : (юрă) // Иванов, К. В. Çырнисен пуххи / К. В. Иванов ; Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2000. – С. 29.*